КАПКĂН

6-мĕш № МАРТШĂН. 1928-мĕш çул.

— 4-мĕш çул тухаҫ. —

Уҫрештенисем ҫăвашланса çитрĕç.

Вырăссем хушшинҫи авалхи йăлапа апрелĕн 1-мĕшĕнҫе çынсем пĕр-пĕринне суйа сăмахсемпе улталама тăрăшаççĕ.

„Канашăн“ 17-мĕш номĕрĕнҫе çапса кăларнă Тĕпĕстăвкомăн постановленийĕ тăрăх, апрелĕн 1-мĕшĕнчен уҫрештенисен ҫăвапланмалла.

— Апрелĕн 1-мĕшĕ—никама та ан ĕнен..

Ҫăвашланатпăр.

Уҫрештенисене ҫăвашлатма тытăннă хыççăн, уҫрештенисенҫе вырăссем нумайланни палăрҫĕ.
(«Канашран»)

Уҫрештенисене ҫăвашлатмалла, тенĕ постановлени пур çĕре те çитсе çапăннă. Çавăнтан вара пур уҫрештенисем те «ҫăвашланма» тытăннă.

Кирек йепле те пулин ĕçе пурнăçа кĕртес пулсан, епĕр комиççисем урлă ĕçлетпĕр. Çавăнпа та, уҫрештенисене ҫăвашлатма та комиççи уйăрма лекрĕ. Паллах, комиççи пĕр сынтан çеç пулма пултараймасть, унта темиçе сын уйăрса хума лекег.

Пирĕн уҫрешгенире пурте ҫăваш пирки, епĕр ку ĕçе комиççи уйăрмасăрах пурнăçа кĕртрĕмĕр. Ытла та ҫăвашланса çитнĕрен пĕр вырăса çĕнĕрен илтĕмĕр. Çавăнтан вара пирĕн уҫрештенинҫе пĕр вырăс хутшăнҫĕ.

Шĕрре ирхине пасар витĕр тухатăп. Хам йулташа курах карăм.

— Àçта слушит тăватăнха есĕ хальҫ? тесе ыйтрăм выльатса сулахай алла парса.

— Урамра, тесе хуҫĕ.

— Мĕнле урамра?

— Çаплах, урамрах...

— Пасар выркăшĕн пуçтармастăн пуль?

— Мана хама пасартан пуçтараççĕ.

— Ара, мĕн ĕçлетĕн вара есĕ?

— Мĕн килнĕ ăна...

— Ăнланса илеймерĕмха епĕ сана, тесе вăтанса каласа хутăм йулташа хирĕç.

— Ăнланмарăн пулсан, ăнлантарам.

Пирĕн уҫрештенире вырăссем нумай пирки, ҫăвашлатма тытăнҫĕç. Вăл ĕçе пурнăçа кĕртме комиççи уйăртăмăр. Çавăнтан вара мана уҫрештенирен «ҫăвашлатса» хуҫĕç. Хальҫ àçта килнĕ —унта çапкаланса çӳретĕп. Вырăн тупаймастăп... Çитменнине арăм та пулин ҫăваш... аҫисем те ҫăвашлах пуплеççĕ. Ҫăнах!..—тесе хуҫĕ манăн йулташ сассине урăхлатса.

— Ҫăвашсене лайăх çав...

— Латнă есĕ ху вырăнта пурăнатăн та.

— Еп ҫăваш, çавăнпа вырăнта.

— Латнă сирĕн пуçлăх ҫăваш та, тесе хуҫĕ йулташ кулнă пек пулса.

— Сирĕн тата?

— Ҫăвашĕ... ҫăвашах та... арăмĕ хула майри... Çавăнпа та вăл ҫăваш арăмĕсене килĕштерсех те каймасть. Арăмĕсем пирки упăшкисен тӳсмелле пулать. Мана та çав шăпа тухрĕ пулас ĕнтĕ... Пĕркунҫе пĕрре хăнана ҫĕнтĕм. Ман пуçлăх арăмпа вырăсла пуплесшĕн. Анҫах вырăсла пĕлеймест ман мур арăмĕ! Тухса кайнă ҫух çаплах каласа хăварҫĕ вара:—плоххой ты ҫеловек, Иванов, и шена у тепе по русски не снайёт.

— Сан ĕç çук ĕнгĕ ман арăмпала, тесе хуртăм епĕ ăна.

— Посмотрим! терĕ те тухрĕ те, карĕ. Сывă пул, тесе те хăвармарĕ.

Ку вăхăтра каланҫҫа çинҫи ҫан тăххăр сăвтарҫĕ. Епĕ те йулташран, сăмаха пĕтермесĕрех, васкаса уйăрăлса карăм.

Çав кунах пĕр пысăк уҫрештени умĕнҫен иртсе пыратăп. Алăкĕ çинҫе пĕр хут çакăнса тăрать. Вулас килме сĕрех вулама тăтăм: **борне де пилтер меле! Байан 6 ч. бор де собрани болядь. Чувашизация доклат болядь Бор де кил!**

Местком.

Шăп 6 сехет çитсен, утрăм çав уҫ рештени умнелле. Уткаласа çӳретĕп Пĕр паллакан слушăшҫипе çапкаланса кĕрсе карăм.

Малтан токлатне итлерĕмĕр. Унтан комиççи суйлама тытăнҫĕç.

Пухăва 13 çын пынă. Вĕсенҫен: ҫăвашсем «нумайтарах»—2 çынна çи теççĕ. Вырăссем 11 çын «анҫах»!

Комиççийе 7 çын çырҫĕç. Анҫах 7-шĕ те вырăс пирки, пĕр ҫăвашĕ хăй йулташне—тепĕр ҫăваша хутăштарҫĕ. Сасăлама тапратрĕç:

— Воскреççенскайа! Кам уншăн?

10 сасă пĕр харăс.

— Литсемерăв!..

Каллех 10 сасă пĕр тăван.

— Пасхальнăй!..

10 сасă пĕр çăвар.

Хăрамалли çук.

Урнă йăтăсемпе пĕрле лайăх йăтăсене те пумай вĕлернĕ (Иалкор çырăвĕ).

Иртнĕ çулти нйунĕн пĕрĕмĕшĕнĕен пуçласа Шупашкарти уҫрештенисенҫи çынсен шуҫĕ 8 проҫҫăн ытларах хушăннă.



Й Ă Т Ă: Ав, ҫăваш уҫрештенисенҫи çынсен шуҫĕ штатсене ҫакарнăранпа 8 проҫҫăн хушăннă. Пирĕн штатсене те ҫакарса пĕтеҫҫĕç те, малалла ĕнтĕ епĕр те хушăнма пуçлатпăр.

— Роштеçтвенскайа!..

— Мана сăмах парăрха, терĕ пĕр ҫăвашĕ ҫăтаймасăр.—Комиççийе суйласа та çитеретпĕр. Пурте пĕр сасăпа вырăссем кĕрсе пĕтрĕç. Неушĕли пĕр ҫăваш та кĕртес мар, терĕ.

Воскреççенскайа сиксе тăҫĕ те:

— Ман хушамат малашне Воскреççенскайа пулмасть. Епĕ ĕнер САКС-а хушамата уйăттарма сайавлени патăм. Епĕ малашне—Павлăвă пулатăп. Рас Павлăвă, ҫăваш шутне те кĕме пултаратăп.

— Тĕрĕс! терĕç 10 çын харăс.

— Пирĕн хушаматпа мар, ĕçпе ҫĕлхепе ĕçлемелле пулать! — терĕ ҫăваш хăйĕн малтанхи сăмахне хŭтлесе.

— Ĕçлетпĕр, халь пирĕн ҫăвашла çапакан машшин пур, тесе хуҫĕ Роштеçтвенскайа машшинискă.

— Машшинĕ пур, пĕр сăмах ҫăвашла пĕлетни?

— Как билмест? билед! Во...

Вĕсен пухăвĕ йепле пĕтнине пĕлместĕп. Епĕ пĕтиҫҫен кĕтсе лармарăм. Анҫах уҫрештенине ҫăвашлатакан комиççи ĕçе тытăнсан—11 вырăсран 13 вырăса çитнĕ, 2 ҫăвашран — пĕр ҫăваш условно хăварнă, тенине илтнĕҫҫĕ. Воскреççенскайа телопроисвиттĕл: билед вырăнне—билмест, теме вĕреннине хам илтнĕҫҫĕ.

Тата пĕрре çак уҫрештенирен машшинпа çапнă хута пĕр йалтан килнĕ çын аллинҫе курнăҫҫĕ. Унта çапла çырнăҫҫĕ: Сан ись Комиссар алы хоны дорох Райисполкома йаны. Конда зок.

Çапла ĕнтĕ вара пур уҫрештени те «ҫăвашланма» тытăннă. Хăшпĕрисем 11 вырăсран 13 «çеç» хăварнă. Икĕ ҫăвашран—1 ҫăваша «çитернĕ». Вырăс хушамаҫĕ ҫăвашла хуçалнă. Биледрен—билмест тĕлне çитнĕ.

Ҫăвашланатпăр. Ç. ШĂПҪĂК.

Мăнкун сăри.

Шур мамăкпа витĕннĕ ҫăваш çĕршывĕн уйĕсемпе йалĕсене, курорт вырăнне хурса, хура кураксемпе шăнкăрҫăсем килсе тулсассăн, сухалла хресҫенсемпе пĕркеленҫĕк питлĕ хресҫен арăмĕсем, ҫан сасси йăхăрнипе, вуламалли çурчсем çумĕн ҫиркӳвелле шăвăнаççĕ пулсассăн, кооператтивсене кăçатсем килме пуçласассăн, çуркунне килме тухнине хаçатсăрах пĕлме пулать. Унсăрăн пуçне тата Макар ҫĕри Кулине ҫĕрине шырама пуçланинҫен те пĕлеççĕ çуркунне сывлама пуçланине.

Иĕпе Кавĕрлен арăмĕ—Кулине йалсоветра ĕçленĕ. Халăх ĕçне те çаннисене тавăрсах ĕçленĕ вăл, килти ĕçĕсене те хура тарне шăлма ĕлкĕреймесĕрех ĕçленĕ. Упăшки унăн Тит ăраттинҫен пулман пулсассăн та, вĕсем хушшинҫе çакăн йышши калаçусем пулкаласа ирттеленĕ ҫас-ҫасах.

— Кавĕрле! Килсем вут çурма!

— Çурăм ыратать.

— Килетĕн пуҫ нимĕр çиме?

— Паçăрах çимеллеҫҫĕ. Хырăм выçса карĕ пайан.

Телейлĕ çынсене хăмпусем сарăлса кăйаҫҫенех ĕçтерекен Мăнкун çитесси пумайах йулмассине сиссе, тата пĕлтĕрхи Мăнкуна та, арăмĕ пирки, пыр йăрăннипех иртерсе йамалла пулнине аса илсе, Кавĕрле капан пек пысăк шухăша кайнă.

Кăçал та хытă Кулине упăшки пырне килте тунă сăрапа кантарас çук. Салат илмеллĕх укçийĕ те, Кулине лартса тунă шалҫасем çинҫе пулнă хăмлийĕ те Кулине аллинҫех. Мĕнле майпа сăра тутарттарас телекаткă пуххисенҫе пăсăлнă Кулинене?

Кавĕрле хайĕн арăмĕ аҫа-пăҫа кĕписене çăвнă çĕре аршăнлă пусăмсемпе пырса тăрать. Питĕнҫе унăн хастарлăх палăрать.

— Хырăму выçрĕ пуҫха? Ситместĕп сана каҫҫен. Çӳçне ҫăх тĕксем кĕрсе ларнă çытартан. Тфу!..

Хĕнес терĕ те арăмне Кавĕрле, анҫах сутран хăрарĕ... ӳркенҫĕ. Ӳркенӳ пулман пулсан, уколовнăй котекспа айăпланмалли ĕç пулса та тăратҫĕн те çавăнта.

Сăра, сăра! Кăпăклă сăра куç умĕнҫе. Хырăмра, пыршăсем шăпăр калаççĕ, хăмпу çийĕн пырĕ йарăнса çӳрет.

Хĕнеме май килмен пирки, тӳрех тытăнҫĕ вăл сăмах çаптарма:

— Арăм, Мăнкун ваҫҫи сăра тумасассăн, çакăнса вилессĕн туйăнмасти сана? Мăнкунта сăра туман çын çакăнса вилет, теççĕ. Пиплире çапла каланă, тет.

— Сăра тата! Ак парам турҫăкапа сăра!..

— Парасси вăл... Çакăнса вилет, теççĕçке. Мана мĕн! Есĕ тăлăха йулатăн.

— Вилсессĕн пытарăпăр. Тупăку çине ларса сăра ĕçĕпĕр,—тăрăхлать Кулине.

Пĕр çĕртен кăтăкланипе кăтăкламан çынна тепĕр çĕртен кăтăклантарма пулать.

Иентип тыгăнать арăм ҫĕри патне пымалли тепĕр сукмак шырама.

— Арăм! Ара, кăçал пирĕн лӳпилей. 20 çул ĕнтĕ епĕр пĕрле пурăнтăмăр. Çав йатпа кăçал сăра тумасан лайăх мар пуҫ. Пирĕн пурнăç малалла та сăра кăпăкĕ пек хăпарса пытăр!

— Шуйттан! Ан асăннă пултăр еп сана каҫҫа тухнă куна!.. Кай! Ак турҫкапа тĕртеп...

Иентип пуçне усрĕ. Мĕн ĕнтĕ? Мăнкунта ĕçмесен тĕнҫере пурăннăн туйăнмасть. Мĕнле çавăрас? Хм... ĕлĕкхине аса илес мари?

Куççулсем витĕр килкартинҫе савăнса çӳрекен ҫăхăсем çинелле пăхса тăракан арăмĕ патне пыҫĕ те Иентип, хоп! ыталаса илҫĕ арăмне.

— Арăм, еп сана сăраран та ытларах йурататăп. Сана йуратнипе... Мĕн.. Сана йуратнипе... çак хăнтла çурăкне те кĕрсе кайма хатĕр. Ес хушатăн пулсан, малалла сăра ĕçместĕп, шыв анҫах ĕçетĕп...

— Ай-ай, хлыҥ есĕ! Сан пек хлыҥпа калаçма нумай ăс кирлĕ. Тфу! Упăшка пулҫи вăл сăрашăн аптратса çӳрет.

Каллех телейсĕр Иăкăнат телейсĕрех йулҫĕ. Çуркуннехи сывлăш та арăм ҫĕрине хускатаймарĕ.

Иентипăн шанҫăк хутаççи çĕтĕлҫĕ. Пуçа хыçас? Мĕн усси пур хыçнинҫен.

Кайăксем те хăрасççĕ.



Ш ă н к ă р ъ а ç и: Вĕçсе кайатпăр пуļ кунтан. Шупашкарта хваттер хаклă, теççĕ.

Кайса выртас выран çине.

Арăмĕ каллех ĕçе пуçăнļĕ. Куçĕсем çăмăрланнă. Хăйне хăй калаçса выртаť Иентип.

Шефсем пăсса йаļĕç шуйттана. Ара пĕлтĕр Мăнкунта сăра ĕçни усăсăр йапала, тесе вĕрентсе хăваръĕç. Ĕçмесĕр хăйсем пурнаççĕ пек. Ав, кушак та ļӳреļе йанаххинļен йухакан шыва ĕçет. Кăçал Мăнкунта леш кассем Петĕр Иванĕ килет, терĕха...

— Мĕн калаçатăн çак Петĕр Иванĕ çинļен,—ыйтрĕ арăмĕ.

— Петĕр Иăванĕ Мăнкунта килет, тет, шефа.

Куçĕсене мăк çине тĕллесе хаш хуйхăрса илļĕ Кулине.

— Иентип упăшкам!—терĕ вăл патне пырса.—Хĕрхенетĕп сана. Шăматкун сăра тăвăпăр. Ļăн каларăн есĕ— Мăнкуна сăрасăр иртерме киļем!

Çирĕм çул ĕлĕкрех сана пирвайхи хут ļуп туса йурату мĕнне пĕлтернĕ çын килессине илтсессĕн, кам ļĕри кăрт-кăрт сикеймĕ, мĕнле вара ĕлĕк йуратнă çын ваļļи сăра тумасан? Ех, Петӳк, Петӳк! Иурататтăмăрļĕ те ĕлĕк пĕрпĕрне иксĕмĕр!..

Иентип пырĕ каллех хăмпу çийĕн йарăнма пуçларĕ, анļах халĕ вăл паçăрхин пек мар, хавасланса йарăнаť.

М а м и.

Çимушшăн тĕлĕк курни.

Хуçайствăри йывăр ĕçсемпе ĕшенсе йывăрланнипе, Сассурски совхос пуçлăхĕ Çимущшĕн йулташ çак март уйăхĕн 19-мĕш ļислинļе ăйха кайнă пек пулаť те, ак çак тĕлĕке кураť: вăл кун ирхине Çимушшĕн й-ш Шупашкара вĕçтерсе çитнĕ пек, унтан Çĕрĕç Комиссариатне кĕрсе хуçайствă ĕçĕнļи йывăрлăхсем çинļен токлат тунă пек, тет. Совхос çапла укçасăр тарăхса пурăннине кура, çураки кампанине иртерме те укçа кирлине кура, Çимушшĕна кунтан пĕр пин тенкĕ укçа паļĕç пек, тет. Кăсйара укçи пулсан тем тĕрлĕ кунĕ çыннăн та кăмăлĕ çӳле хăпараť, савăннă пек пулаť, çапла вара Çимушшĕн та савăннипе пыр йарăннине сисет те, кайаť пек, тет, кăсйине пулштав «йӳççине» ļиксе, хăйĕн снаккомăй пухкалтĕр патне. Унта ĕçсеçисен, пуç хĕрнĕ пек пулсан, Çимушшĕнăн хусах хĕрарăм патне кайма кăмăл туртаť. Вара вăл илет пек, тет, Коркоп макаçăнĕнļен пĕр пулштав коļйак тейекен хаклă ерех, сулланаť пек, тет, пĕр упăшки килте çук майра патне (унăн упăшкипе пĕрле ĕçленĕ иккен вĕсем), Унта кĕрес умĕн Çимушшĕн, шикленмелле ан пултăр тесе, пин тенкĕ укçана ӳтпе йĕм хушшине антарса йараť пек, тет. Кунта вара вĕсем иккĕшĕ коļйак ĕçкеленĕ пек, тет, унтан Çимушшĕн ку инкене кăмăлласа урама куļаť тума ļĕннĕ пек, тет. Урамра темле асăрхамасăр çак инкепе хăй арăмĕпе калаçмалла сăмахсене калаçма тытăннă пек, тет. Çав вăхăтрах сулахай пит çăмартине темĕскер пырса çапăвнипе, Çимушшĕн куçĕсенļен вут хĕлхемĕ тухса кайаť те, вăл... вăранах кайаť! Пăхаť: милитси путкинļе лараť иккен. Ĕç мĕнле-мĕнле пулļĕ?—тесе ыйтаççĕ унтан. Çапла, çапла ăйхăпа пырса кĕтĕм те № инке патне, вăл ман çумран пин тенкĕ укçана кăларса илнĕ, тет Çимушшĕн.

Упăскă туса пăхаççĕ те, укçа ӳтпе йĕм хушшинļен сиксе тухаť. Вара тин çеç аса илет Çимушшĕн хăй тĕлĕкне. Ļăнах та тĕлĕнмелле тĕлĕк курнă иккен вăл. Мур хиртĕр ун пек тĕлĕке! Çав тĕлĕк пирки халь сута лекнĕ, тет.

С.

ХУТ КУПИҢҪИ ХУТСЕМ



„Çутта кăларакан".

Ҫĕлхе шăмăсăр, тесе ахаҫ каламан çав ваттисем. Акă пĕр протоккол кăтартам:

ПРОТОКОЛ

собрания женщин дер. Юрмекейкино (Аликовского района) состоявшееся 8-го марта 1928 г.

Под председательством учительницы ЗАЙЦЕВОЙ.

Слушали:

I. Международный коммунистический день женщин.

Постановили:

Резолюция не была принята полностью (?) (О строительстве социализма), а потому решили **постепенно выходить из тьмы к свету.**

Иуратнă уҫиттĕлнитсă, санăн та, çак ресоҫутси пирки, тĕттĕмрен çутта тухмалла. Хăш алăкран тухмаллине пĕлетни?

Ҫăваш çырнă хут.

Апрелĕн 1 мĕшĕн йалĕçтăвком кĕнĕлерĕсем «ҫăвашланса çитрĕç». Ытти йалĕçтăвкомсем темле те, Мулкаҫ касси (Вăрнар р.) йалĕçтăвкомĕ хутсене «ҫăвашлах» çыраҫ вара. Ак çак хута никам та вырăс çырнă, тесе калас çук:

«Дано сия умершего гражданина Шукова Ивана дествительной умер, чтон сельсовет дают Шукова Анна для сняти с учета умершего гражданина Шукову Ивана он умер в чем и удостоверение подписю и печатю

Преседатель селсьвета **И. М. Удиван.**

Секретарь селсовета **Арланов».**

Хуҫă çинҫе çапла ресоҫутси пур:

«Т. И. М. Удиванов. **Выслать умершего гражданина** се-ме 1926 года Ходаровскому военному столу Шукову Ивана для снятия с учета

Делопроизводитель **М. Илменов**

Мĕнле майпа пурнăçа кĕртес çав ресоҫутсийе,—каласа парăрха, ресоҫутси хуракан хаклă йулташсем!

Аслă вырăна кĕме хатĕрленекен çын.

Ĕлĕк çухалнă сассине манифес пирки тыраса тупнă çын ак мĕнле хут çырса йалсовета алă пусгарма пынă:

«Пред'явитель сего гр-н дер. Кугесевой, Чебоксарского района ЧАССР Степанов Митрофан Игнатьевич... являясь как инвалид... лишь только способен к научноумственному работу, а именно: по письменному, часть по счетоводству, по милицейскому, по охране казенных лесов, по торговой части, по мочальной части, а также по хозяйственной части может управлять и заведывать в разных учреждениях государства»...

Волховстрой пуçлăхĕ тăвас, йе Тĕпĕçтăвком претçетаттĕлĕ тăвас Çеппанăва ку хутпа?—Вулакансем, калăрха!

Ахаҫ лариҫҫĕн кĕрĕк аркине те пулин йăвала.

Те çĕнĕ шухăшпа, те кивĕ шухăшпа çырнă çак хута?

„1928 года января 13 дня. Я, нижеподписавшийся гр. д. Тюмеровой, Канашского района ЧАССР Иван Степенович Донской выдал настоящую подписку Тюмеровскому СИК-у в том, что я в дальнейшем жену ругать не буду, бить не буду, сундук ломать не буду и буду спать вместе с женой в чем расписуюсь

Иван Тонской.

Тĕмер йалĕçтăвкомĕн кун пек потписка кашни авланнă çынтанах илмелле.

Пушăҫĕ çурмаран.

— Ваççа! Есĕ пушăт касма пымастăни, айта кайар манпа пĕрле. Епĕ ыран ирхине кайас, тетĕп.

— Пырасса пырасҫĕ те...

— Мĕн пырасҫĕ те?.. Ӳркенетни мĕн ĕçлеме. Халĕ те килте йăлхава персе анҫах выртатăн. Çийӳ çине тăхăнмалли çук. Конешнă пырас пулаҫ. Çитменнине тата выçă лараттăр.

— Ӳркенсе мар, Иван пиҫҫе, манăн мĕнле кайас? Нимĕн те çукĕçкеха.

— Мĕн кирлĕ сана, ĕçлеме аллу-уру пур?

— Вĕсем пурта...

— Урăх мĕн кирлĕ сана? Ытти пурне те хам илетĕп. Пушăтне çурмалла тăватпăр.

Иурĕ еппин, кайăпăр.

* * *

Вăрманта икĕ кун ĕçлерĕç. Икĕ кун хушшинҫе 100 пушăт касрĕç.

— Ну, çитĕ Ваççа,—терĕ Иван пуртине çуна çине пырса хурса.— Айта, пуçла тийеме. Манăн таçта щăмшак ыратма пуçларĕ, кайса çуттине ĕçемха каштах, терĕ те, уттарҫĕ çуттине шырама. Ваççа ĕçлеме хастар аҫа. Пĕр çур сехет хушшинҫе пушăтне тийесе лартрĕ, лашине кӳлҫĕ, тухса анҫах каймалла.

Акă, Иван пиҫҫĕш те çуттине ĕçсе кӳпнĕ те урам тăрăх кăшкăрса килет: —Ей, Ваççа, шуйттан, пушăтне тийерĕне?..

* * *

Каç пулаҫҫен киле çитрĕç. Апатсем çикелесен, Иван пăта çинҫе çакăнса тăракан шутшăрçине илҫĕ те: ну, Ваççа, тавай шутлама пуçлар, терĕ.

Ваççа нимĕн те ҫĕнмесĕр ларҫĕ.

— Апат икĕ кун çинĕшĕн пĕр тенкĕ, лашана çитерме тенкĕ те 50 пуслăх сĕлĕ илнĕ—75 пус, пуртă хăйранăшăн 50 пус пана—25 пус, «çуттишĕн» 1 тенкĕ те 50 пус, лав укçи 5 тенкĕ, мĕн пурĕ санран Ваççа 8 тенкĕ те 50 пус тухаҫ. Вот, çак укçана есĕ мана тупса паратăн пулсассăн, епĕ сана 50 пушăтне парса йаратăп, терĕ хăйĕн выçă куçĕсемпе Ваççа çинелне пăхса Иăван.

Ваççа тăр-р хытса карĕ.

— Ара, мĕнле, Иван пиҫҫе, есĕ пушăҫĕ çурмалла пулаҫ, ытти хамăн пулаҫ, терĕнçке есĕ?

— Апла пулсассăн пĕр пушăт та ан кĕт манран, терĕ Иван кăшкăрсах.

— Иван пиҫҫе, манăн хаҫ ăçтан тупса парас сана 8 тенкĕ те 50 пус? Есĕ мана пушăтне парса йар та, кайран епĕ сана, çăпата туса укçа тăвăп та, парса татăп еппин.

— Е-е-ей!.. сире шанса парса йарха. Ху пек ухмах тесе шутлатна мĕн есĕ мана...

Ваççа пĕр пушăтсăрах, пуçне ҫиксе тухса утрĕ килнелле...

КВАСКОВ Н.

Ку кам?

— Ку кам ҫӳсĕрскер çуна çине хăпарса, лашине каçăртса сиктерсе ҫупаҫ?

— Çавна паламастăни? Вăл 1-мĕш Ҫепаккăври комсомол йаҫейккин ответлă çыруçи. «Капкăна» çекленесрен, лашине çĕр çине пустарастăн мар, каçăртса çӳлтен ҫуптараҫ. Çăхан.

Ревиçи.

Конператтив ҫленĕ: Ăçта ҫикнĕ ара пирĕн претçетаттĕл çав 800 тенкĕ укçана... Есĕр ревиçи тунă ҫух пĕлтĕри хăҫ?...

Ревиçи комиççин ҫленĕ:—Мĕн терĕн çак ес?.. 800 тенкĕ растраттă терĕни?.. Ăçта, карҫăк, ман çĕлĕк, еп конператтива ревиçи тума кайатăп... Р—и.

Тухтăр патĕнҫе.

Тухтăр:—Есĕ перускă хыт туртатăн пулмалла, сан ҫĕре йăлтах хавшаса кайнă.

Ҫирлĕ çын:—Çук, уншăн пулас çук. Перускă туртма пăрахса ҫĕлĕмпе туртма пуçлани çулталăк ытла ĕнтĕ.

Р—и.

Аслă апат каçĕ

Пуçлăх: Амин, амин калатăп сире: сирте

Ывăлĕ валҫăи çул шыракан.

Пĕре каçхине ман пата Вăрманкас йалĕнҫи (Вăрнар р.) Кĕркури Петĕрĕ хăйĕн ывăлне çул уçасшăн: есĕ ман тарçă пурри çинҫен сăмах сарса ан çӳре, тата çакна та ан ман: Çманăн ывăл ĕлĕк парттине кĕнĕ, анҫах çынсене улталанăшăн кăларнă; халĕ вăл парттийе кĕме сайавлени панă. Ху та пĕлетĕнçке хаҫхи вăхăтра парттире тăракан çынсене пур йапалана та, ĕçлеме те шанаççĕ: парттинҫе тăнă пулсан такçанах копнераттив прикашҫăк пулмаллаҫҫĕ, халĕ...

—Итлеха, сана пурте йуратаççĕ, аҫасем те ваттисем те пурте... Ман шутпа çапла тусан аванши? —Ĕпĕ сана хам ывăла хăвпа йертсе çуренĕшĕн аҫалех тумăп... укçа...

— Каллех тăнланаймарăм: мĕншĕн есĕ питĕ тăран ывăлна парттийе кĕртесшĕн?!

— Ман ывăлăн ним те çук; суйлавра мана та ывăла та суйламаççĕ, илтетни?..

— Илтрĕм ĕнтĕ, Кĕркури! Пĕлетĕп. Кĕркури, есĕ мĕншĕн тарçуна ниçта та кăлармастăн?..

— Ш-ш-ш-ш!.. Çын илтсен лайăх мар, хуллен! тет мана.

— Ма ара каламалла мар?

— Çук. Есĕ ним те итлесшĕн мар еп каланă сăмаха!.. Каларăм сана снайĕт?.. Ни ку-ку!—тет. Ну ҫĕнсе килха ывăлна халех!..—Çук вăл хаҫ сопранине кайрĕ?—Мĕнле сопранийе карĕ. Профссиуссенне.

— Йепле кĕнĕха сойуса есĕр? —Тар-

(тайнăй веҫҫĕр).

ри мана тытса парĕ!.. (МӨ. XXXV, 20-21 ст.)

çă йăҫĕпе кĕнĕçке. Ан шарла, çын илтсен аван мар.

— Есĕ тарçуна укçа тӳлетни?

— Мĕн укçи? Тарçă мĕн ĕçлет вăл? Нихăçан та ĕçленине курман.

— Нумай пулати есĕр парттийе кĕресси çинҫен шутлани?

— Çук, епĕ ĕлĕкреннĕх тăрăшап та анҫах... ан-ҫа х..,

Ман аҫа 6 уйăх парттинҫе тăҫĕ те, кооператтива çаратнă тесе, сăмах сарҫĕç. Анҫах ку тĕрĕс мар. Çакăн пек пулҫĕ: манăн пата, ĕлĕк вулăсра стăршина пулнă вăхăтри, ман помощник килҫĕ те, пĕр виçĕ ҫăрка çитсă, ерех тата ытти йăпаласене парса йăҫĕ. Çавăн пирки парттинҫен кăларҫĕç. Хаҫ вырăн кирлĕ, çавăнпа парттийе кĕме васкаҫ. Хамăрăн аппарат пур, ерех йухтаратпăр; ман ывăл парттине кĕреҫҫен пĕр виçĕкун ĕçесех мар, тет Атту парттине илмеççĕçке...

Çавăн пек 2 сехет хушши калаçса ларсан, аран кăларса йăтăм хам килрен Кĕркури Петĕрне.

Маҫук.

Хаклă.

— Мĕн хак тăраҫ ку пулă?

— Ку алă пус тăраҫ.

— Тăварлăçке апла.

— Тăварлă мар çав, куратăни çĕрме пуçланă. Кăвар.

Паллă ĕнтĕ.

— Лешкасри Иванов ерехпе кĕрешекен комиссийе кĕни мĕн?

— Ма?

— Кунĕн-çĕрĕн ӳсĕр çӳрет.

Не йăҫĕпе тухат.

Укçа кирлисем, итлĕр!

Пулаҫ вăл йăпала—пĕри çураçнă хĕре тĕпри вăрласа кайаҫ. Ҫакаç сывви çыраҫ:

Канаш райĕçтăвкомĕн каççирĕ районри слушăшҫисене шалу пана ҫух хăй камне ĕнентерекен хуг тавраш ыйтмасҫ те, çын йаҫĕпе шалу илекенсем пулкалаççĕ. Пĕре Ҫакаç шкулĕнҫе ĕçлекен Антрейĕв шалуне çаклатса кайнă пĕр шулĕк, тепре Çĕн-Мамири страхховккă пухакана Çтепан Павлăва тӳлемелли укçана илсе кайнă.

Укçăрсем пĕтсе çитсен, ниçтан та тупма çук пулсан, Канаш райĕçтăвкомĕ каççирĕ патне кайăр! Вара унта есĕр «епĕ çав йалти шкулта ĕçлекен» йе, «йалканаш çыруçи» тесе укçа илсе тухма пултараттăр. Пиҫĕ лайăх вĕт!

Ушкăнăн ĕçлес ĕç.

Муркар халăхĕ питех те хуйхăра пуçланă. Кăçал ерех пĕçермелле мар, тенине илтсен, ерехсĕр мĕнле пурăнасси çинҫен канашлама халăх хурал пӳртне пуçтарăннă. Унта кулаксем халăха ак мĕнле пăратма пуçланă:

— Пĕреххутҫен пирĕн пĕтĕм халăха пуçгармалла та, пĕр пысăк хуран тумалла, коллективлă ĕçлемелле. Ерттелле ĕçлесен Совет тивмест, тенĕ. (Пĕкĕ).

Тивмест çав! Пуçран шăлсах аҫашлĕ... хĕртнĕ уҫҫукпа. Пуринҫен ытла „орканисаттăрсене“ аҫашлĕ. Ыйтамха сиртен: миçе çын сирĕн йалта ăслă çын?

Токкумĕнтсем тĕрĕслекен.

Ватă çынсем калаççĕ: пулас инкексинкек куçа курăнса килмест, теççĕ. Вăл çапла та, анҫах хăш-пĕр çынна пулас инкек куçа курăнсах пыраҫ.

Рункă йалĕнҫи (Вăрнар р.) Шупăр Петĕрĕ ĕçсе ӳсĕрлсен йал çыннисенҫен токкумĕнт ыйтма пуçланă. Памасан вĕлеретĕп, тесе хăратнă». (Матруссăв).

Шупăр Петĕрĕ, тĕрмене каймалли токкумĕнт пурри сан?

Каламаллине каламаллах

Мами йалĕнҫи (Канаш р.) Мишуркка Елекçейĕ тăлăх карҫăксене улталама кушакран та ăслăрах. Пиçен çыраҫ:

Çак Елекçи Хĕритун карҫăкĕнҫен сана страхховккă укçине тӳлесрен хăтаратăп тесе, пĕр кĕренкке хăмла илнĕ. «Капкăн», сан шухăшпа ку çынна вҫаткă илекен, теме йураҫи? Каласан йураҫ, каламасан урăхла вара. Калăр, анҫах хăйне мар—халăх сутне калăр.

Хĕлле упа мĕн тăваҫ?

Хут пĕлменлĕхпе кĕрешекен ушкăнсен йаҫейккисем нумайĕшĕ кăмака çине хăпарса кайнă та, харлаттарсах çывăраççĕ. Иалçынни çыраҫ:

Палахтинск районĕнҫи (Красноярск округĕ) Уртен йалĕн йаҫейкки иртнĕ ийӳҫ уйăхĕнҫен пуçласа халиҫҫен нимĕн те ĕçлемен. Иртнĕ 12-мĕш ҫислара пулнă сопранире улахри сăмахсем çинҫен калаççах вăхăт иртерҫĕç. Орканисаттăрĕ: лайăх çелкор çук, çелкор пулсан çырса йарĕҫҫĕ, тесе лараҫ.

Çелкор çук пулсан та, «Капкăн» пур. Улах апаҫĕ çитеремха сире! Тутли, йӳçи? Çăвара тирмести йĕплĕ çăмах?

Кĕттерекен хăна.

Еçпепе йалĕсем (Вăрмар районĕ) райĕçтăвкоман илнĕ хуг тăрăх, кино курма пухăнни çинҫен çыраҫ:

Калана сехетре халăх пуçтарăнҫĕ. Пĕр сехет кĕтрĕмĕр, ик сехет кĕтрĕмĕр... 9 сехет те иртрĕ. 11 сехет çитрĕ, 12 сехет... Кино çук та çук. Çăпата ăстисем—2-шер мăшăр çăпата тăвасран, хĕрсем—кăнҫала арласран йултăмăр, тесе вăрçса саланса пĕтрĕç, тет.

Унăн кӳренмеллийех çук. Пирĕн Шупашкарта çавăн пек кашни кунах сопранисем пулаççĕ те, çынсем пухăнасса кĕтсе 6—7-шер листа хут вараласси йулаҫ,—çапах та епĕр кӳренместпĕр.

Лессакри калаçу.

— Иулташ саветуйăшăн, пирĕн кăçал сулă йывăçĕ шывпа антарма çпетсă çукçке, ку ĕç ăнăçлă иртеймесрен шикленмелле мари?

— Ниҫево, хамăрах пултарăпăр ку ĕçе. Ку ҫухне, решим экономине асăр хамалла вăхăтра, ытлашши çпетсă усрама май килмест.

— Çапах та иртнĕ çулхине аса илсен сплав ĕçĕ çине çăмăллăн çеç пăхма йурамаҫҫ пек. Хăвах астăватăн: иртнĕ çул виçĕ пин пĕрене улăх тăрăх йухса çӳрерĕ, тата Сăрă шывĕ çинҫе 50 купа йăхăн йывăç ларса йулса пăр айне пулҫĕ.

— Ну штош? Пĕрене улăх тăрăх саланнă, вçоровно ăна пуçтарнă, аллă купа йăхăн йывăç пăр айне йулнă, вçоровно ăна катса кăларнă. Ниҫево, туҫккĕ укçу пултăр, укçа пулсан, хĕр те пулаҫ, тенĕ ваттисем; виçĕ пин пĕрене мар, пилĕк пин салансан та пуçтарăпăр. Çпетсă усраса укçа тăкма пултараймастăпах вара.

— Иулташ саветуйăшăн, акă пирĕн икĕ лаша пур, вĕсене усрама куҫҫăрне те шутласан уйăха 106 тенкĕ тухаҫ, лашисемпе ытлашши çӳрени те туйăнмаҫҫ. Вĕсенҫен упыткă курни анҫах, лашасем вырăнне...

— Ну, штош? Упыткă курăпăр, çапах та лашасемсĕр пурăнни килĕшмест; лаша усрамасан пирĕн уҫрештени сумлă, хисеплĕ уҫрештени шутĕнҫен тухма пултараҫ. Çавна пĕл ес, соснаттĕлнăй краштанин пулас килсен.

И л т н ĕ ç ы п.

Совет çескийĕсен ăмăртăвĕ.

— Кам утă çунипе ăмăртса каçса кайма пултарĕ çак кĕпер урлă?

Комтĕшмĕшлĕх.

Хăш-пĕр ответлă рапотнĕксем, хăйсем йури иҫҫартарах тумланса, арамĕсене качăрлантараççĕ.

— Санăн арăму улпут майри пек çӳрет, ĕсе ху мĕншĕн çак таранҫен йалти кĕрĕке хыçмастăн ара?...

— Е-е, есĕ ăшшĕ пĕлместĕн. Ман йалсене ҫасҫасах çӳремелле пулаҫ. Иала лайăх паҫҫто тăхăнса кайха есĕсана никам та ҫесни комунис шутне хумаҫҫ. Арăм--трукое тело. Вăл хулара пурăнаҫ. Р—и.

„Сысна“.

(Иуптарса калани).

Сысна путек сурăха
Тĕл пулҫĕ картара.
Иуратрĕ ăна ҫуптанах
Ҫăнахах.
— Илетĕп!
Тупата каҫҫах илетĕп.
Ан тăр тек, тусăм, туртăнса,
Кӳр ҫас тутуна...
Хаҫ саккун хушаҫ йуратма!—
Текелет сысна
Лешне астарса.
— Те ҫăнах ес калан...
Анҫах... те кулан...
Хăратăп çав санран.
Ан кул ес манран,—
Текелет çур сурăх
(Мĕн каланха урăх?)
— Е-е ей çав! „Хăратăп“ тет.
Пăрах хăрама,
Ҫĕрем ман сан ципки тĕлкĕшет.
Ҫăн калап, ĕп суймас тупата!
Хай путек сыснана ĕненҫĕ,
Пĕр-пĕрне икĕш те ҫуп турĕç,
Вилеҫҫен йуратма сăмах паҫĕç.
Пуçланҫĕ йурату
Пурнаççĕ пыл та çу!
Анҫах
Ҫăвахах
Йуратун хăйĕн çулĕ пур—
Ҫипер çул çинҫех лакăм, мур!
Пурнассăн пĕр çул хай путек
Пуç усрĕ шеремет,
Пранларĕ, путек ĕмĕртет...
Сысна йуратмаҫҫ ăна тек!

АТТАЙ М.

Хĕрлĕ туталлă культурă.

(Йалти йулташ патне йанă çыру).

Епĕ йалта мĕнле пурăннине есĕ хăвах лайăх пĕлетĕн ĕнтĕ. Сирĕнпе пĕрлех улахсем тăрăх хĕрсене çуйăхтарса çӳретиĕм, çулла уг çитерме кайатгăмăр, кĕркунне Курпун Михала сатĕнҫен улма вăрлагтăмăр. Астăватни тага, пĕре вăн иккĕн Танила Урини патне тесе карăмăр та, ашшĕ иксĕмĕре те сӳс пушăпа ăшаласа йаҫĕ. Ах, хăйамат! Çавна эса илсен, халĕ те çан-çурăм сăрхăлтатса кайаҫ. Анҫах, тепре каласан, вăл Уринешĕн патак çини те çылăх мар. Унашкал хĕр хамăр тавра çук теҫҫĕç вĕт...

— Ку мĕн мурĕшĕн йалти хĕрсемпе минтрешме тапратрĕ ара, тейăн есĕ ман çырува вуласан. Ех, аҫам! Килсе пурăнха хулана. Ун ҫух сана та йалти Уринесем лайăх аса килекен пулĕç.

Хулапа килсенех манăн кунта паллана хĕр те çукҫĕ. Хĕрсем çинҫен питех те аса илмеспĕм... Такам шуйттанĕ хушрĕ-и тен мана мăн çăварни кун театтăра кайма. Çавăнтан кайран ĕнтĕ йăлтах пăсăлса карăм. Хама хам паллайми пултăм. Кун çинҫен урăх никама та каламан, сана çех, ҫи çывăх тус шутне хурса, пĕлтерес терĕм. Ак çакнашкал ĕç пулҫĕ:

Мăн çăварни кун аллă пус парса пилет илтĕм те, вунпиллĕкĕмĕш ретре ҫаршав уçăласа кĕтсе ларатăп. Кĕç ман çумма пĕрĕскер, тутисене хĕрлĕ кранташпа сăрланă хĕр кăшăрт кĕрсе ларҫĕ.

Пĕре сулахай куçпа сисмесле пăхса илтĕм, тепре сылтăммипе—пит маттур хĕр шелмă. Унтан ҫавсапа асархăмасла айăккинҫен тĕртсе илтĕм, анҫах мăрт та тумарĕ кур хĕрĕ...

— Кунпа паллашас мар тăк—етем пулас мар, терĕм хам пуçăшшĕн тарăхса. Хамăн ҫăнах та питĕ паллашас килсе карĕ. Йалти Уринене пулсан, çавăрнă та тыгнăҫҫĕ, кунта апла йурамасĕ вĕт. Кунта паллашма питĕ хĕн.

Ларсан ларсан:—Халĕ миçе сехет ши, пĕлеттĕри есĕр, тесе ыйтрăм хайхискерĕнҫен.

— Пĕлместĕп, тесе хуҫĕ мана хирĕç.

Кăшт ларсан каллех:—Пайан пирĕн мĕн кун ара, терĕм.

Куна хирĕç хĕр хĕрлĕ тутине кăшт ҫалăштарҫĕ те:

— Пĕлместĕп, тесе татса пăрахрĕ каллех.

Иалган килнĕ çынна ҫĕлхе-çăвар çавăрнуҫăсăрриех пĕтерегçке вăл. Хулари каҫҫă пулсан ман выränта вăл хĕрпе еп пĕре паллашиҫҫĕн çĕр хут паллашĕ. Ех, мушик çав епĕр, мушик!..

Тепĕр каçне каллех, çавна курас тесех, театтăра карăм. Ку хĕр манăн çи-пуç наҫартан калаçастăн мар пулĕ тесе, йури пиҫҫе пиншак-шалаварĕсене тăхăнса карăм. Ҫăнах та пиҫҫе тумтирри питĕ лайăх пулăшрĕ. Çав каçах еп вăл хĕре килне усатса хăвартăм.

— Хăçан сире тепре курма пулаҫши, тесе ыйтрăм алă парса уйăрлнă ҫух.

— Ыран 7 сехетре театтăра пырăр, терĕ. Хамăн ҫун савăннипе ҫĕре ҫапта йĕппи пек йанлантараҫ.

— Ну, ĕнтĕ сыв пулăр, йалти Уринесем! Тин епĕ сирĕн йулташ мар, терĕм киле тавăрăннă ҫух йалти пурнăçа аса илсе.

Каç пулаҫ те ир пулаҫ. Ир пулаҫ те каç пулаҫ. Кăнтăрла слушпăра, каçпа Ваҫăпа. Кашнă каç пĕр тенкĕ те ик тенкĕ укçа пĕтет. Театтăра кайап, кинона, канфеткă илен—пĕри те укçасăр пулмасĕ вĕт. Пĕр уйăх шалувĕ ернене те ырăн çитеймерĕ. Ех-ех-хей!.. Пăрахмалла пулҫĕ лайăх хĕрех укçа сахал пирки.

Нумай пулмасĕ расрет хăпартрĕç. Çавăнпа, халĕ укçа хĕрсемпе çӳремеллĕх те пур тесе, иртнĕ шăмат кун Сонĕ йатлăскерпе паллашрăм. Паллашсан тепĕр кун веҫҫăра карăмăр. Веҫҫĕрта хĕрпе каҫҫăсем çавра çил пек пăтранаççĕ—ташлаççĕ.

— Тавай епĕр те кайар, терĕ мана Сонĕ.

— Ĕпĕ... еп... пĕл... Манăн виçĕм кун анне вилнĕ—ташлама йурамаçĕ, тесе йатăм аран. Пĕреллĕхе çапла çăлăнтăм. Анҫах тепĕр веҫҫăра кайсанах манăн Сонĕ пĕр çăмăлттай каҫҫăпа ташща йерсе карĕ те, ман пата тухса та курăнмарĕ. Çĕтрĕ. Çакăн хыççăн апат-çимĕç тăкакĕсене пĕҫĕк-

Çураки çывхарас умĕн.

— Ларнă çĕртех çывăрса пыраť.
— Пулăшком претçетаттĕлĕ пулмалла ку çын.

летсех уҫҫитлĕ тытса ташлама вĕренмелле пулҫĕ. Вĕрентĕм. Халĕ ĕнтĕ аптрамастăп.

Ташлама вĕреннĕ майĕпе виçĕм кун тепĕр Райă йатлăскĕрне тупрăм. Вĕсем килĕнҫе ларнă ҫух, Райă ройаҫ çинҫе выльама тытăнҫĕ те:—Айта ес йурла, еп компанироваť тăвам, терĕ.

Епĕ каккуй йурлама та... Пĕр-пĕр каҫака путекки те манран илемлĕрех çухăрма пултарĕ.

— Пайан ман пыра пăрсутитсă пулнă, текелесе аран йурă шухăшне халап айнелле кĕртсе йатăм.

— Апла пулсан акă, киттарă çинҫе мĕн те пулсан выльаса пар...

Кунта пăрсутитсă сăлтавĕ те çăлаймарĕ. Măн-мак тукаласа халапа урăх çулпа çавăрса йатăм та, пĕр хаçат тупса вуланă пекки пулса лартăм.

— Мĕнле есĕр ытла та măн камăллă ара? Ни йурласшăн мар, ни киттарăна йуратмастăр. Еппин мĕн те пулсан кулăшла йапала каласа кăтартăр...

— Кусем мана ҫĕррĕнех çийешшĕниç... Пĕтрĕм пĕтрĕм... Ех йалти улахра пулсан кăтартăттăм та еп сана... вăрçса илтĕм хам пуç тĕшшĕн.

— Ну, ну, тавай ҫасрах калăр! Еп итлетĕп...

— Епĕ саншăн ҫиркăри артиси мĕн кулăшла йапаласем каласа çӳреме, ытах кулас килет пулсан, илсе вула вăн „Капкăн“ йĕ „Крокотил“ тесе кăшкăрса йатăм та, çилленнипе ним тума пĕлмесĕр çавăнтах хам хваттере тухса вĕçтертĕм.

Унтан кайран Райăна курман. Курас та çук.

Вăт, аҫам, çавнашкал кунта хулара. Ку йапала те ĕлĕк те çакнашкалах пулнă, те халĕ анҫах, куҫтурă революцийĕ майĕпе пулма тытăннă?.. Ну сывпул! Санăн тусу (йаҫĕ.)

Р. Ç. Ҫутах манман. Есĕ Уринене курсан калаха—вăл епĕ йала пымасăр каҫҫа тухма ан васкатăр.

РОНИ.

Ĕлĕкхипе халӳхи.

(Улпут йурри),

Да, нуда!
Епĕ карăм ута,
Шăрпăк тăрнӳĕ ман кута.
Епĕ патăм сута
Сут кĕӳĕ ман хута
Да, нуда!
Тунăӳĕ еп çурта
Пурăннăӳĕ еп унта
Хырăмăм та мăн та
Ĕнсе те хулăм та
Микулай та пурта
Да, нуда!
Вунçиӳĕмĕш çулта
Революцци çав çулта
Сикрĕ тухрĕ ӳăнах та,
Иарса илӳĕ мана та,
Тытрĕ илӳĕ çурта та,
Да, нуда!—
Еп памарăм сута.
Хăрарăм тупăта
Тухса тартăм таçта
Аçта ăшă унта
Пуршуйсем çта çавăнта—
Да, нуда!
Пурăнтăм еп унта
Ĕçлерĕм еп хăйаматла.
Тытрăм епĕ акĕнта
Пĕтĕрес терĕм Совета...
Да, нуда!
Да, нуда!
Есĕ карăн ута
Шăрпăк тăрнӳĕ сан кута.
Есĕ патăн сута
Сут кĕмерĕ сан хута
Кирлĕ мар ес Совета.
Да, нуда!

Е. ПЕРШĔВ.

Вăтантăм.

Хĕрарăмсен пуххи. Телекаткăсем суйлаççĕ. Пĕр матка алă çĕклемест. Вăл алă çĕклеменнине кура, пĕр комсомолĕс:

— Мĕншĕн ес, Микита арăм, сасăланă ӳухне алăна пĕртте çĕклеместĕн, терĕ.

— Нумай пулаӳ, кин пур пирки, ӳуста çăрман та, алă хура. Алăма çынсене кăтартма хăрарăм!—терĕ матки.

Атнер П.

Шупашкар пушарнĕкĕсем.



Пушар сӳнтерме кайаççĕ. Сӳнтерсе таврăнаççĕ,

ПУÇА КИЛНĔ ШУХĂШ: Пушар сӳнтерме кайнă ӳухне васкамаççĕ, мĕншĕн тесен унта ĕçлеме тивет; таврăннă ӳухне...

Тухтăр патĕнҫе.

Творик йал халăхĕ (Елĕк рай.) йалăн уй хапхине сутса ĕçнĕ.

— Пуç ыратнипе аптратăп. Халер йернĕ.
— Хăçантанпа ыратаҫ апла?
— Халăхпа уй хапхи сутса ĕçрĕмĕр те, тем майпа çавăнта халер пырса йернĕ.

Тем те пулма пултараҫ пурнăçра.

«Сунталăн» 2(44)-мĕш номĕрĕнҫе ак мĕнле майпа вулакансене ăс параҫ пĕр Çаваç йатлă сăвăç:

«Хăҫ уй-хир, хĕт çилĕ—
Маншăн йут.
Тĕтĕм сӳннĕ кĕлĕм,
Шурă хуг.
Вăт мĕн манăн—çитĕннĕ савни»...

Тĕмер йалĕçтăвкомĕ Тонской хрестĕентен маткине уйăрăлмалла мар потписка илнĕ пек, „Канаш“ Сойусĕн те Çаваçран çут-çанталăк илемĕнҫен уйрăлмалла мар потписка илмелле. Ана халех илмелле, мĕншĕн тесен Çаваç хăй сăвви йулашкинҫе ак мĕнле хăрушлăха кăтартаҫ:

Çаккăн хыççăн мантăм
Еп йата.
Куҫҫанатăп йатшăн
Ир те каç.
Те Васҫа еп саншăн,
Те Çаваç?

Ун пек пулма, çук турă, ан хушах!

Капкăнинă.

(Ăмăртуллă вăйă).

Çакăнта кăтартнă ыйтусем çине ответсем йамалла. Камăн ответĕсем витĕкĕнтерех (çивĕҫрех) пулаççĕ, çавсенҫен 5-шне 5 преми (парнĕ) паратпăр—пĕрер çуллăх „Капкăн“, йе çуршар çуллăх „Сунтал“.

Ăмăрту мĕнле иртнине ответĕсемпе пĕрле „Капкăнăн“ 8-мĕш номĕрĕнҫе çапса пĕлтерĕпĕр.

1. Сармантейăн сар ҫăххи мĕншĕн сар çăмарта тунă?
2. Тилит-тилит Микулайăн мĕншĕн укçи ик сум вунă пус анҫах пулнă?
3. Ура шуççан кам ӳкмест?
4. Мĕншĕн Мăнкунта ĕçеççĕ?
5. Ма ѣçес мар, çийес мар?
6. Хушамату мĕнле сан?
7. Мĕне кирлĕ вăл?
8. Мĕншĕн Атăла Çавал темеççĕ?
9. Тухаҫи те тухмасти?
10. Кама тĕртсе çыратăн çак есĕ?
11. Уколовнăй котекспа миçе стаҫйа?
12. Мĕнле çанталăк пулаҫ майăн 1-мĕшĕнҫе?
13. Мĕн пӳр ҫĕрере?
14. Слушăшҫисем саҥатти пĕтмесĕрех уҫрештенирен тухса ан кайҫăр тесен, мĕн тумалла?
15. Àçталла вĕрет çил?
16. Ҫи-ҫи кăсийа, ăçта кайан, кăсийа?
17. Мĕнле сикет пăрçа?
18 Хура ĕне сĕҫĕ тутли, йӳçи?
19. Мĕншĕн шăршлă пулă?
20. Мĕншĕн çын çупмасăр пит çăмарти кăвакармаҫ?

ҪĂВАШ УҪРЕШТЕНИ.

Сывлăх Комиссариатĕнҫе пĕлтĕрхи ийунĕн 1-мĕшĕнче ҫăваш 63 проҫ. пулнă, кăҫал 38 проҫ. йулнă.

— Ҫăвашĕ ан палăртăр.

Отв. редактор **А. Золотов.**

Чувашлит № 335 Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.